Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

53 (8014) № ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи утă (июль) уйăхĕн 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Симĕс ĕç çи – 2012

## Пĕр çемьери пек тăрăшаççĕ

«Выльăх апачĕ хатĕрлесси – тĕп вырăнта», – терĕç иртен пуçласа каçчен нумай çул ӳсекен курăксен хирĕнчен фермăсем çывăхне типнĕ утăна рулонсене пуçтарса турттаракан механизаторсемпе водительсем. Сăмах вакланăçемĕн вĕсем «Свобода» хуçалăх ертӳçин В. Никитинăн шухăшĕпе пĕр пулни палăрчĕ.

Хуçалăха кăçалтан ертсе пыма пуçланă Виталий Никитин мĕн тунипе хăй хальлĕхе пĕтĕмпех килĕшменнине пытармасть.

– Паянхи пурнăç ыйтăмĕпе хăвăрт аталанма пĕтĕм технологие алла илсе çитерейместпĕр-ха. Çавна кура тĕллĕн-тĕллĕн экономика уксахланине те сисетпĕр, анчах çав çитменлĕхсене пĕтерме май пуррине те куратпăр. Ăна пурнăçа кĕртме пирĕн ĕçлекенсем те, ял хуçалăх техники те пур, пĕрлехи тĕллев те паллă. Акă кăçалхи ут çире 477 гектар çинчен нумай çул ӳсекен курăксене тата улăх-çаран утине çулса, типĕтсе, пуçтарса кĕртмелле. Хуçалăх ĕçченĕсем умри тĕллеве ăнланни курăнать. Алă усас марччĕ çеç, – терĕ хуçалăхри уй-хир ĕçĕсемпе паллаштарма ыйтсан Виталий Васильевич.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.)

## Ĕçлес кăмăлĕ пысăк



*Ирина Александровна Воробьева – Отарккăри «Малыш» ача садĕнчи çамрăк специалистсенчен пĕри. Хастар воспитателĕн ĕçлес кăмăлĕ пысăк пулнине ĕçтешĕсем кăна мар, садика çӳрекен ачасен ашшĕ-амăшĕсем те аван пĕлеççĕ. Унăн ĕçне республика шайĕнче те палăртрĕç. Ирина Александровна пĕлтĕрхи пĕтĕмлетӳсемпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине тивĕçрĕ. Ăна малашне те пысăк çитĕнӳсем тума сунатпăр.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Пулăшу

## Тӳлевсĕрех йышăнаççĕ

Кубаньре инкеке пула шар курнисем валли гуманитари пулăшăвĕн посылкисемпе укçа тӳлевĕсене почтăран тӳлевсĕрех ярса пама пулать.

2012 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче шыв илнине пула Краснодар крайĕнче инкек тӳснисем валли çак япаласене тӳлевсĕр ярса пама йышăнатпăр:

– харпăр хăйĕн гигиенин хатĕрĕсем (шампунь, шăл пасти, шăл щетки, супăнь т. ыт. те);
– çумалли тата дезинфекци хатĕрĕсем;
– хаклă мар кĕсье телефонĕсем;
– тӳшек-минтер таврашĕ;
– ал шăлли, минтер, утиял;
– кĕпе-тумтир, пушмак.

Çӳлте асăннă япаласем унччен усă курнисем пулмалла мар. Хатĕрсене çак адреспа ярса памалла: МЧС Краснодарского края, Краснодар, Почтамт 350000. Посылка çинче «Гуманитарная помощь» тесе çырса хуни пулмалла.

Усă курнă япаласене ярса парассине асăрхаттарас тĕллевпе посылкăсене уççăн йышăнаççĕ.

Краснодар крайĕнче инкек тӳснисем валли укçа-тенкĕне çак адреспа ярса памалла (уншăн тариф тӳлевĕ тытмаççĕ):

Назначение платежа: Добровольное пожертвование гражданам, пострадавшим от наводнений в Краснодарском крае в 2012 году.

ИНН 2309030678.

КПП 230901001, Краснодарское краевое отделение Общероссийской общественной организации «Российский Красный Крест», Краснодарское отделение № 8619 Сбербанка России.

К/С 30101810100000000602,
БИК 040349602,
Р/С 40703810330000000106.

**Раççей почтин Чăваш Республикинчи управленийĕн пресс-службы.**

Патшалăх пулăшăвĕ

## Хушма тӳлев

Шăпах çакăн чухлĕ хушма тӳлев илме пултарĕç малашне хатĕрлесе панă кашни килограмм сĕтшĕн хушма хуçалăх тытса пыракансемпе ял хуçалăх организацийĕсен ертӳçисем. Кун пирки калакан указа республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев алă пуснă. Çапла майпа правительствăра сутăн илмелли хаксем чакнă тапхăрта сĕт туса илекенсен тата хатĕрлесе паракансен тăкакĕсен пайне саплаштарма йышăннă.

Республика ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов палăртнă тăрăх ялан тенĕ пекех июнь – август уйăхĕсенче сĕт ыйтнинчен ытларах. Çавна май кăçал ăна сутăн илессин сезонри хакĕ пысăк предприятисенче 20,6 процент, ял çыннисенчен сутăн илессин хакĕ 42,4 процент чакнă. Производство рентабеллĕхĕ çуккине пула уйрăм хуçалăхсенче те, ял хуçалăх организацийĕсенче те выльăхсен йышĕ чакать. Халĕ вара документпа килĕшӳллĕн килти хушма хуçалăх тытакансене хатĕрлесе панă кашни килограмм сĕтшĕн 1 тенкĕ те 50 пус, ял хуçалăх организацийĕсене 1-мĕш сортлă сĕтшĕн 1 тенкĕ тата пысăк класлă сортшăн 2 тенкĕ хушса тӳлеме тытăнаççĕ. Çавна валли бюджетра 70 миллион тенкĕ пăхса хунă.

Республикăра

## Рейтинг ӳснĕ

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кĕпĕрнаттăрсем витĕм кӳрессинчи хăйĕн рейтингне ӳстернĕ. 2012 çулхи июнь уйăхĕнче вăл 69-мĕш вырăнтан 45-мĕш вырăна хăпарнă. Асăннă рейтинга хатĕрлекен политика тата экономика коммуникацийĕсен агентстви кĕпĕрнаттăрсен витĕмне виçĕ категорипе хаклать: питĕ вăйлă витĕм кӳрекен, вăйлă витĕм кӳрекен тата вăтам витĕм кӳрекен. Вĕсен шучĕпе Михаил Игнатьев вăйлă витĕм кӳрекенсен йышне кĕрет.

Рейтингра Мускав мэрĕ Сергей Собянин малта. Иккĕмĕш вырăнта – Тутар Республикин Президенчĕ Рустам Минниханов, виççĕмĕш вырăнта – Санкт-Петербург кĕпĕрнаттăрĕ Георгий Полтавченко.

Çавна та палăртмалла. Михаил Игнатьев «Медиалоги» медиарейтингĕнче те «ӳснĕ». Кăçалхи июнь уйăхĕнче вăл Атăл тăрăхĕнчи федераллă округри пуçлăхсем хушшинче 9-мĕш позицие тивĕçнĕ. Ку вăл унччен хинчен 3 пункт çӳлерех. Лидерсем шутĕнче вара ку хутĕнче Никита Белых (Киров облаçĕ), Валерий Шанцев (Чул хула облаçĕ), Рустам Минниханов (Тутар Республики).

**REGNUM информаци агентстви.**

## Çĕнĕ министр – С. Мельников

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн июлĕн 10-мĕшĕнчи 82 номерлĕ указĕпе республикăри физкультура, спорт тата туризм министрĕ пулма Сергей Владимирович Мельникова çирĕплетнĕ.

Сергей Мельников 1971 çулта Çĕмĕрле хулинче çуралнă. Мускав облаçĕн физкультура институтне пĕтернĕ, каярах – Атăл-Вятка академийĕн патшалăх службин Шупашкарти филиалне. Министр пулма çирĕплетиччен физкультура, спорт тата туризм министрĕн тивĕçĕсене уйăх çурăна яхăн пурнăçлас умĕн вăл министрăн пĕрремĕш çумĕнче вăй хунă.

## Чăваш Енре – ялти спорт вăййисем

Паян Шупашкарта Пĕтĕм Раççейри çуллахи ялти спорт вăййисене «Олимпийский» стадионта 20 сехетре савăнăçлă лару-тăрура уçаççĕ.

Чăваш Ене çĕр-шыври 60 команда килессе малтанах пĕлтернĕ. Пирĕн республика команди ялсенчи 50 спортсменран тăрать. Вĕсем вăйăсенчи спортăн 17 тĕсĕнче хутшăнаççĕ: çăмăл атлетикăра, ирĕклĕ майпа кĕрешессинче, урамри баскетболта, çуллахи полиатлонта, вырăс лаптинче, канат туртассинче тата ытти чылай ăмăртура вăй виçеççĕ. Кунсăр пуçне доярсен, çулакансен тата механизаторсен профессиллĕ ăмăртăвĕсене те палăртса хунă.

Чăваш Енре иртекен вăйăсенче программăна çĕнĕлĕх кĕртнĕ. Пĕрремĕш хут виçĕ енлĕ вăй виçесси пулать: михĕпе кукленсе тăрасси, тиев хунă урапана вырăнтан куçарасси тата кире пуканне хапха урлă ывăтасси.

Спорт вăййисем тĕп хулари «Олимпийский», «Энергия», «Спартак» стадионсенче тата Çĕнĕ Шупашкарпа Кӳкеçре иртеççĕ.

Июлĕн 17-мĕшĕнче 15 сехетре Шупашкарти залив хĕрринчи Хӳтĕлевçĕ Амăш монуменчĕ патĕнче вăйăсем вĕçленеççĕ. Кайса курма тăрăшăр: пур ăмăртăва сăнама та, вăйăсем пуçланнине тата вĕçленнине курма тӳлевсĕрех кĕртеççĕ.

## Социаллă карттăпа усă курма меллĕ

Çĕнĕлĕх вăй илет

Республикăри пур социаллă хӳтлĕх пайĕнче те пĕлтĕр кĕркунне социаллă карттăсем илме заявленисем йышăнма пуçларĕç. Çак электронлă карттăпа усă курма питĕ меллĕ. Карттă счечĕ çине пенси укçи, пособисем тата ытти тĕрлĕ социаллă тӳлевсем куçараççĕ. Обществăлла транспорт çинче çăмăллăхсемпе усă куракансем çак карттăна троллейбуссемпе автобуссем çинче тата хулаçум автобусĕсемпе (çакăн йышши транспорта терминалсем вырнаçтараççĕ) çӳренĕ чух электронлă проездной вырăнне усă курма пултараççĕ.

Карттăна малтанах регионти тата федераллă шайри çăмăллăхсемпе усă куракансем тивĕçеççĕ: ĕç ветеранĕсем, тыл ĕçченĕсем, реабилитациленнĕ çынсем, политика репрессийĕсенче сиен тӳснисем, «Хисеплĕ донорсем», ялти специалистсем, ача-пăча пособине илсе тăракансем.

Районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н. Петрова пĕлтернĕ тăрăх ĕç ветеранĕсем районта халĕ пурĕ 5277 çын, тыл ĕçченĕсем – 1070 çын, реабилитациленнисем – 46-ăн, донорсем – 77-ĕн, ялти специалистсем 1351 çын, федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансем 2910 çын. Политика репрессийĕсенче сиен тӳснисем çук. Çапла вара пирĕн районта пурăнакан 11782 çын республика шайĕнчи социаллă карттăна илме заявлени çырса пама пултарать.

Паянхи кун тĕлне хӳтлĕх пайне кун пек карттăна илме ыйтса 372 çын заявлени çырса панă.

Карттă счечĕ çине пенси укçи, тĕрлĕ пособи укçи куçнине шута илсен ăна илес текенсем татах та нумайланасси куç кĕрет. Карттăпа усă куракан çын Перекет банкĕн офисĕсенче счет çине укçа хума та пултарать. Çак карттăпа усă курса банкоматсенчен комисси тӳлевĕсĕрех укçа илме, тавара укçасăр расчетпа туянма пулать. Çавăн пекех банкоматсемпе терминалсем урлă коммуналлă услугăсемшĕн, телефонпа усă курнăшăн тӳлеме, кĕсье телефонĕн номерĕ çине укçа куçарма та май пулать. Кунсăр пуçне тĕрлĕ налук, штраф тӳлеме, пĕр карттă çинчен тепĕр карттă çине укçа куçарма та, кредит тӳлеме те (Перекет банкĕн уйрăмĕнче илнĕ пулсан) пултараççĕ. Социаллă карттăпа усă курса пенсин страхлакан тата пухăнакан пайĕсем пирки пĕлме те, врач патне çырăнма та май пур. Çын карттăна çухатрĕ пулсан çийĕнчех «Мобильлĕ банк» услугăпа усă курса ăна хупса хума пултарать.

Пĕр сăмахпа каласан хăвăрпа пĕрле тĕрлĕ документ илсе çӳремелле пулмасть, вăхăт та перекетленет.

Социаллă карттă 2014 çулччен вăйра. 2014 çултан пуçласа универсаллă электронлă карттăсем пама тытăнаççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпăр



Чи хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, хунямана, кукамая, мамака – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Июлия Федотовна ФЕДОРОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ĕмĕр тăршшĕпех дояркăра ĕçлесе, мăшăрне вăхăтсăр çухатса, 5 ачине пăхса çитĕнтерсе тĕрĕс çул çине тăратма çăмăл пулман пуль сана, анне. Сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр, эс пурришĕн савăнатпăр, санпа мухтанатпăр. Сан утма çулу такăр, кун-çулу вăрăм, сывлăху 100 çула çитме пултăр, сăн-питре яланах йăл кулă çиçтĕр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 4 ывăлĕ, 5 кинĕ, 12 мăнукĕ, 5 кĕçĕн мăнукĕ, çывăх тăванĕсем, хăтипе тăхлачисем.**

# «Ачасем çумра пулнине нимĕн те çитмест»

**Чуна уçса калаçар-ха**

***«Укçапа эрехех çынна ăсран кăларать» – чăваш литературин классикĕн К.В. Иванов çырнă «Нарспи» поэминчи çак йĕркесене паянхи кун çинчен çырнă тейĕн. Укçипе эрехĕ тата пĕр-пĕринчен пĕрре те уйрăлмаççĕ. Пĕрисем çав спирт пур шĕвеке сутса укçа «çапаççĕ», теприсем вара ăна ĕçсе ăсне çеç мар, пуç та çухатаççĕ. Районти право йĕркине пăсассине хирĕç кĕрешекен комисси ларăвĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев спирт пур шĕвеке сутакан, пĕчĕк кĕленчесене сутакан харпăрлăх хуçисене сутма чарăнма, ыр кăмăллăх кăтартма чĕнсе каланăччĕ. Ал-урана сĕрме кăларакан çак шĕвеке сутма чаракан саккун хальлĕхе çук. Район администрацийĕ ку ыйтăва республика шайĕнче хускатнă хыççăн унта та çак ыйтăва пăхса тухрĕç. Çак эрнере ЧР Патшалăх Канашĕн ĕç ушкăнĕн ларăвĕнче ку ыйту çинче тĕплĕн чарăнчĕç. Спирт шайĕ пысăк шĕвексене – косметика хатĕрĕсене – аптекăсемпе почта уйрăмĕсенче сутас ĕçре кирлĕ мерăсем йышăнма ыйтса ЧР Патшалăх Канашĕ РФ Правительство председателĕ Д. Медведев патне çырупа тухма хатĕрленет. Мĕнле улшăнусем пулĕç – пурăнсан курăпăр.***

...17 çултах дояркăра ĕçлеме пуçланăскер, ĕçрен хăрамастчĕ вăл. Хăй пурнăçĕ тепĕр 10 çултан урлă-пирлĕ пĕтĕрĕнме пуçласси хĕр упраçăн пуçра та пулман. Ачипе йăпанатчĕ вăл. Каярахпа пурнăç юлташĕ те тĕл пулчĕ. 25 çултаччĕ ун чух Люся. Пĕрлешрĕç. Хăнăхнă ĕçрех вăй хучĕ качча тухсан та. Мăшăрĕ ĕçкеленĕшĕн тарăхатчĕ çамрăк хĕрарăм. Ял тăрăх шыратчĕ упăшкине. Аслă ачи пуçламăш класра вĕренетчĕ ун чух. Мăшăрĕпе ача çуралчĕ. Анчах çакă та арçынна хăйне алла илме, хăй кил хуçи иккенне туйса илме пулăшмарĕ пулас. Ӳсĕрле кăшкăрашма, урма пуçлатчĕ. Сахал пулнă-и тата малтан «юрататăп» текен арăмне çӳçрен сĕтĕрни. Мĕншĕн тетĕр-и? Çамрăк арăм унпа ĕçке кайма килĕшменшĕн. «Хăнана хунямапа каятчĕç. Эп пыманшăн упăшка ман çине питĕ хытă тарăхатчĕ», – аса илет паян çав вăхăтсене Люся.

Унтан тепре çие юлчĕ. Ку ачине çуратнă чух пĕрле ĕçлекенсем киле килкелетчĕç. Килекен хăнана мĕнле пĕрер черккепе хăналамастăн – çак йăлана пăхăнатпăр-çке эпир. Çитменнине упăшка киле килсе тарăхтарать. Ак пулчĕ те сана хуйха пусармалли сăлтав. Люся та малтан пĕр-ик черккерен пуçларĕ.

– Унтан пĕчĕккĕн пĕрер кĕленче çине куçрăм, – хаш! сывлать вăл.

8 çултан вара çамрăк хĕрарăм, вырăсла каласан, «запойпа» ĕçме пуçланă.

***Халь илсе кăтартакан тĕслĕх тен камăнне те пулин совеçне «вăратĕ». Вăл е ку инкек пулсан эпир ниçта кайса кĕрейменнипе Турă мĕн çырнинчен иртейместĕн тесе хаш! сывлатпăр. Анчах чĕре хамăрăн çаплах малтан пурнăç пуçран килсе çапиччен тума пултарнă утăмсене туманшăн турттсах ыратать, куçăм куççульпе тулать. Хамăр пурнăç хамăрăн алăрах иккенне те манса каймалла мар иккен пирĕн. Телейлĕ пулма вăтанмалла мар иккен. Çакна паян хăйĕн чунне уçса пама килĕшнĕ 30 урлă каçнă çамрăк хĕрарăм сăмахĕсем те çирĕплетсе параççĕ.***

***Анаталла каякан çул вăл аннăçемĕн чăнкăлансах пырать. Çырма тĕпнех анса кайсан, унтан хăпарма йывăр. Вăхăтра чарăнни кирлĕ. Люся вара хăй ача амăшĕ иккенне, хăй кил ăшши пулмаллине туйса илме вăй çитерчĕ.***

***– Халĕ ачасем мана хирĕç анне, анне тесе чупаççĕ. Мĕнле телей иккен вăл – çумра ачасем пулни, çемье пĕрле пулни, – тет вăл паян.***

***Вăл каланă сăмахсем ĕçекен хĕрарăмсенчен пĕрин патне те пулин çитсен тем пекехчĕ. Çак шуçлак çул енне пĕр-ик утăм ярса пуснă ача амăшĕсем патне çитсен тата мĕн тери аван пулнă пулĕччĕ. Çак çемьери ачасем пекех нумай-нумай çемьере ачасем: «Пирĕн анне халь ĕçмест», – тесе каламалла пултăрччĕ.***

Ĕçмен кунĕсем 3–4 кун пулкаланă. Унтан каллех пуçĕпех эрех стаканĕ ăшне «путнă».

**– Урă çынна, килтисене яланах çак ыйту хумхантарать: ăçтан укçа тупать эрех ĕçекен çын эрех ĕçме?**

– Хам пеккисем тупăнатчĕç. Ман çук пулсан та вĕсен тупăнатчĕ. 1–2 черкке пĕрех тупса ĕçме пулатчĕ. Ĕçнĕ пулсан та эп ĕçлеме пăрахман. Ĕç укçи ман уншăн е куншăн тӳлесех пĕтетчĕ. Ĕçме вара кĕсье тĕпне вак укçа юлатчĕ.

**– Ачасем вара мĕнле? Шутланă-и вĕсем çинчен?**

– Ӳсĕр пулсан та апат пĕçерме хăтланаттăм çав. Упăшка çине шанмалли те çукчĕ. Вăл та ĕçетчĕ. Хуняма пăрахман ачасене. Вăл пĕçерсе çитеретчĕ.

**– Сипленес кăмăл пулман-и урăлнă самантсенче?**

– Пулнă. Çав тери çын ретне тăрас килетчĕ. 2010 çулта кайса килтĕм малтан эрех ĕçнинчен сипленме. Ун хыççăн 5–6 уйăх ĕçмерĕм. Мăшăр вара çаплах ĕçетчĕ. Ун çине тарăхса хам та çĕнĕрен ĕçме пуçларăм. Хуняма хушша-хуппа кĕни те пулман мар. Упăшкана ман çинчен тем каласа паратчĕ, мăшăрăм мана хĕнени те сахал мар пулнă.

Урăлнă самантсенче çын пулас шухăш пуçрахчĕ. Тепре сипленме кайма пуçтарăннăччĕ. Шăп утă вăхăчĕччĕ те – каяймарăм.

**– Татăклă утăм тума мĕн хистерĕ, мĕн вăй пачĕ хăвăра алла илме?**

– Районти опека органĕнчен пирĕн патра сахал мар пулнă. Каплах пулсан ачасемсĕр тăрса юлатăп вĕт, текен шухăш пуçа кĕрсен сехĕрленсех ӳкеттĕм. Ĕçсĕр те тăрса юлатăп вĕт капла, тесе шухăшлаттăм. Çакă вăй пачĕ пулĕ. Тăвансем кодировкăна кайма хистетчĕç. Килĕшрĕм. Сипленме кайса килтĕм. Халĕ ĕçместĕп.

**– Ĕçнĕ чухнехи вăхăтпа паянхи куна илсен хăвăра мĕнле туятăр?**

– Сиплев пӳлĕмĕнчен урама тухсанах куç та лайăхрах курма пуçларĕ пек, пуçра та янкăр уçă пулса кайрĕ. Мĕн пулчĕ манпа, – тесе шухăшласа илтĕм малтанах. Тӳрех кăмăл çĕкленсе кайрĕ, пурăнас, ачасемшĕн тăрăшас шухăш капланса килчĕ. Мĕнле телей иккен вăл сывă пурнăç йĕркипе пурăнни. Малтан ачасем пирĕн анне ĕçет тесе хурланса калатчĕç пулсан, халь мана курсанах савăнса хирĕç чупаççĕ. Ирех тăратăп, выльăхсене пуçтарса кĕçĕннине садика яратăп, шкула каякансене валли те таса çи-пуç каçхинех хатĕр, сĕтел çинче – вĕри апат. Тулли кăмăлпа ĕçе тухса чупатăп. Пурăнатăп. Ĕçрен киле чун туртать. Хам урăх çĕрте пулсан та шухăш ачасем çинчех. Халь мăшăрăма ĕçме пăрахтарас килет. Калаçатăп-ха кун пирки хăйĕнпе.

**– Паян çав лачакаран тухайман хĕрарăмсене, арçынсене мĕн каланă пулăттăр?**

– Ĕçме пăрахас шухăш пулсан, кăмăл пулсан, ĕçме пăрахма пулать. Тухтăр пире çапла каларĕ: «Ĕçни вăл – чир. Унтан сипленмелле. Вăтанмалла мар». Ку, чăнах та, çапла. Çемьере килĕшӳ пулнине, ачасем çумра пулнине нимĕн те çитмест. Çакă вăл – телей.

***Апла пулсан телейлĕ пулма хамăрсăр пуçне пире никам та чармасть. Эрех пĕтĕм инкек сăлтавĕ пулнине вăхăтра ăнланса илмелле кăна. Телейлĕ пулма вăтанмалла мар. Ăнланса илинччĕç çакна ачисене эрехпе улăштарнă амăшĕсем, ашшĕсем. Çавар патне илсе пынă эрех стаканĕ витĕр ачасен куççульпе тулнă куçĕсене куринччĕç вĕсем. Хăйсен ачисен çиес килни çинчен калакан сассине илтинччĕç пуçа эрехпе минретсе пурнăç юхăмĕнчен тухсах ӳкиччен.***

***Тата эрехпе минренĕ арçынсемпе хĕрарăмсене пĕчĕк кĕленчери спирт пур шĕвеке сутакан харпăрлăх хуçисене çак ыйтăва парас килет. Çав шĕвеке туянса сире услам туса паракан çынсем вырăнне хăвăр, хăвăрăн мăшăра, аппăра, йăмăкăра, шăллăрпа пиччĕрсене «лартса» пăхăр. Çав ӳсĕрсен выçă ачисем вырăнĕнче хăвăр ачăрсем тесе шутласа илĕр-ха. Сутнă пулăттăр-и эсир çакăн хыççăн çав «фунфуриксене»!? Иккĕленетĕп. Апла пулсан çын куççулĕ çĕре ӳкмест тенине манса каяс марччĕ. Çын инкекĕ çинче телей тупнă тенине никам пиркиех те илтменччĕ ку таранччен. Ыранi, паян-и – хăв тунă усал ĕç хăв патнех таврăнать.***

**Л. ТУКТИНА.**

# Ссылка та, вăрçă та таптаймарĕ Клементьевсен телейне

**Çын ĕçĕпе ыр ятлă**



Ача çуралсан кашни амăшĕн чун-чĕри телейпе тулать, куçĕ савăнăçпа çиçет. Кивĕ Матьăкри И. Клементьева 4-мĕш ачине çуратнă хыççăн та çак туйăм мĕн иккенне пĕлмерĕ. Çук-çук, ачи ссылкăра çуралнăшăн та мар, тăван Йӳçкасси тăрăхĕнчен чылай инçе çĕрте пулнăран та мар...

Ун чухне Якку Клементьевсем çил арманĕ тытнă, вăтам пурăнакан хресчен çемйи шутланнă. Раскулачить тумалли çемьесен списокне вĕсем те лекнĕ. Пĕтĕм çемйипех – ывăлĕпе ун ачин çемйин те пурнăç çулĕ пĕр енне – ссылкăна выртнă. Коноша станцийĕнчен инçех мар вырнаçнă Шенчуга поселокĕнче Николайăн ашшĕ бараксем тунă çĕрте ĕçленĕ. Урама выляма тухнă ачасем урамра çын шăммисем йăваланса выртни çинчен час-часах каланă. «Пирĕн те кĕçех çапла выртса çӳремелле пулать», – тенĕ лешсем ачисене. Çак вырăн – паян Муркашра пурăнакан Н. Клементьев çуралнă вырăн. Паян та чунĕ хĕсĕнсе ыратать унăн çав синкерлĕ вырăна аса илсен.

Нимĕн те çиме çуккипе Петр Яковлевич сăнне çухатма, шыçăнма пуçларĕ. Пиччĕшĕ Петербургра красноармеец пулни мăшăрне киле таврăнма май панă. Анчах ялта та ырă пурнăç курман Ирина Арсентьевна. Çын патĕнче пурăннă. Каярахпа пурнăç кăшт лайăхлансан мăшăрĕ ăна каялла чĕнсе ярать. Каять хĕрарăм. Ссылкăна иккĕмĕш хут кайсан Николай çуралнă.

Хуп-хура çуралнăскер çине пăхса тухтăрсем тӳрех çапла каларĕç: «Пурăнакан ача мар ку сан». Çак сăмахсем мĕне пĕлтернине лайăх пĕлет малтанхи виçĕ ачине çухатнă амăш чĕри: никам амăшне те вăл шăпана Турă ан пӳртĕр. Çынсене кăтартма та шикленетчĕ ывăлне Ирина Арсентьевна. Пĕррехинче чикан майри куçĕ умне пулчĕ-пулчех вăл алăри ачипе. «Ан пăшăрхан, ачу пурăнать», – терĕ ăна лешĕ. Çав сăмахсем хыççăн улăм çӳппинчен те çӳхерех шанăç кĕрсе вырнаçрĕ амăш чĕрине. Шухăшлама та пултарайман вăл ун чухне хăйĕн ывăлĕ пыра-киле ватлăха ал парасса. Вăл вара, Муркашра пурăнакан Н. Клементьев, майăн 29-мĕшĕнче 75 çул тултарчĕ.

1940 çулта Николайăн йăмăкĕ Ксения çуралчĕ. Пурнăç та майлашăнса пыма пуçланă пекчĕ. Анчах çук иккен. Шăпа синкерлĕ самантсене хĕрхенмесĕр хатĕрленĕ иккен уншăн. 1942 çулта мăшăрĕ вăрçа кайсан Ирина Арсентьевна ик ачине çавăтса киле килме çула тухать. Ссылкăра çĕвĕçре ĕçленĕскер, çĕвĕ машинине те хăйĕнчен хăвармасть. Утиялпа çыхса ăна хул пуççи урлă çакса ярать. Бидонпа шыв илет. Пуйăс çинче шывсăр антăхнăскерсем, вăл чарăннă-чарăнман амăшĕ чукун çул хĕрринчен 650 метрсенче вырнаçнă шыв кӳлленчĕкне курса унта чупать. Ачисене вакунта пĕрле ларакансене пăхма каласа хăварать. Бидонне тултарса çеç пĕтерчĕ – пуйăс хускалса кайрĕ. Унпа пĕрле унăн икĕ ачи те...

Чупрĕ, чупрĕ хĕрарăм пуйăс хыççăн. Алăри бидонĕ те тухса ӳксе юлчĕ. Çук, çитеймест иккен. Анчах мĕн вăй пачĕ-ши – юлашки вăйне пуçтарса юлашки вакун патнеллех çывхарчĕ хĕрарăм. Анчах пуйăс та малаллах каять... Умра ывăлĕн, унтан хĕрĕн сăнĕсем мĕлтлетсе иртрĕç. Мĕнле çитес! Тав Турра, юлашки вакунти красноармеецсем хĕрарăма алăран çĕклесе пĕтĕм вăйран малалла чупакан пуйăс вакунĕ çине туртса хăпартрĕç. Çав салтаксем пулман пулсан шăпа ăçта илсе çитернĕ пулĕччĕ-ши Николайпа Ксение. Вакунти çынсем вĕсене ачасен çуртне парасси пирки калаçса тăнă çĕрте чарăннă пуйăс алăкĕнчен унăн амăшĕ кĕрсе тăрсан, вĕсем савăннипе те, хумханнипе те пĕр хушă сăмах чĕнейми тăнă.

– Тахăш ача çуртĕнче ӳсеттĕмĕр-ха çав салтаксем пулман пулсан, – куçран куççулĕ тухать 75 çулхи Николай Петровичăн.

Анчах тăван ялта та кĕтес пулман вĕсен. Вĕсем пурăннă çурта туяннă çын унта хăратаканни пуртан сутса янă. Каярахпа кăна Клементьевсем хăйсен тăван килĕ пулнă çуртра Элĕкре хатĕрлев кантурĕ пулнине пĕлеççĕ. Юрать-ха ял Совет секретарĕ вĕсене хăйсем патне пурăнма илет. Йăлтак тетчĕç ăна ялта. Каярахпа 1946 çулччен пĕр пĕччен пурăнакан ватă патĕнче пурăнаççĕ.

Шкула кайсан пĕр сăмах та чăвашла пĕлмен Николай чăвашла калаçма вĕренет. Ашшĕ фронтран таврăнсан 1946 çулта Клементьевсен çемйи Шупашкара куçса каять. Николай Шупашкарти 2 номерлĕ шкулта вĕренме пуçлать. Тата тепĕр 2 çултан Архангельск облаçĕнчен аслашшĕпе асламăшĕ таврăнаççĕ. Ашшĕн йăмăкĕ Валя аппăшĕ ашшĕпе амăшне 12 çул курманскер тăнне çухатнине паянхи пек астăвать Николай Петрович. Ытла та чĕрене ыраттарать иккен вăл тăван юнсене çич юта çич çĕрелле уйăрни.

1949 çул. Çĕр-шывра çăкăра та карточка йĕркипе пама пуçлаççĕ. Клементьевсем тăван Йӳçкасси тăрăхне таврăнаççĕ. Çăмăл мар пулин те тăван тăрăхра вăхăт та хăвăрт иртет. Кивĕрех çурт илсе пурăнма пуçлать çемье. Николай 1955 çулта Йӳçкасси шкулне пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти педагогика институтне физикăпа математика факультетне заявлени парать. Пур экзамена та ăнăçлă тытса физика уйрăмне кĕрет.

1960 çулта çамрăк физика учителĕ салтак шинельне тăхăнать. Костромари стратегиллĕ ракетăсен çарне лекет. 1961 çулта Нарофоминскра экзаменсем панă хыççăн запасри офицер пулса тăрать. Çартан таврăнсан мĕн 1963 çултан пуçласа тивĕçлĕ канăва тухиччен, 1997 çулччен, Муркашри вăтам шкулта ачасене физикăна вĕрентет. Çак хушăра мĕн чухлĕ ачана пĕлӳ панисĕр пуçне пурнăçра хăйсен вырăнне тупма пулăшман-ши вăл? Паян кун килекен салам çырăвĕсем те Николай Петрович хăй çамрăклăхне ахаль ирттерменни çинчен калаççĕ: астăваççĕ, хисеплеççĕ, юратаççĕ паян та ăна хăй вĕрентнĕ ачасем.

Çынсен пурнăçĕ мĕнле çаврăнса тухасси учительпе врачсем хăйсен тивĕçне мĕнле пурнăçланинчен çав тери нумай килет. Çак икĕ пархатарлă профессипе пурăнаççĕ Клементьевсен çемйипе вĕсен ачисен çемйисем те. Мĕн çуралсанах пурнăç хакĕ мĕне тăнине активме пуçланăран пулĕ çынсене май килнĕ таран усă кӳме тăрăшаççĕ вĕсем. Мăшăрĕ Перасковья Викторовна ĕмĕрĕпех районти тĕп больницăра операци сестри пулса ĕçлерĕ. Темиçе талăк киле килменни сахал пулнă-и? Николай Петровичпа пĕр-пĕрне ăнланса-юратса пурăннăран, çемьере пĕр-пĕрне шута хунăран ачисем те тĕрĕс воспитани илсе çитĕнчĕç, ял çинче ятлă çынсем пулса ӳсрĕç. Аслă хĕрĕ Галина Николаевна Кузнецова амăш çулĕпе кайрĕ: районти тĕп больницăра реаниматолог врач, анестезиолог пулса ĕçлет. Çул çинчи инкеке лекнĕ çынна вилĕмрен çăлмалла-и е пурнăçне хăрушлăха кĕртсе ӳкернĕ çынна больницăна илсе килеççĕ-и – Галина Николаевна хăйĕнчен килнине йăлтах тăвать: çын пурăнтăрччĕ çеç.

Галина Николаевнăн мăшăрне, районти тĕп больницăри опытлă хирурга Юрий Александрович Кузнецова, пĕлмен çын пур-ши тата. Ун алли витĕр тата миçе 100 çыннăн кун-çулĕ çĕнĕрен «шăранса» тухнăши, мĕн чухлĕ çын тав тăвать пулĕ ăна пурнăç илемне çĕнĕрен курма пулăшнăшăн, хăйсене вилĕмрен çăлнăшăн.

Николай Клементьевичăн мăнукĕсем – Кузнецовсен ывăлĕпе хĕрĕ те – Иринăпа Дима ашшĕпе амăшĕн пурнăç çулне суйларĕç, тухтăр профессине алла илме хатĕрленеççĕ вĕсем: И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетĕнче вĕренеççĕ.

Николай Клементьевичăн тепĕр хĕрĕ вара ашшĕн çулĕпе кайрĕ тесен те йăнăш пулмасть. Малтан Павлов ячĕллĕ музучилище пĕтерчĕ. Унтан Хусанти юридици институтĕнчен вĕренсе тухрĕ. Паян Татьяна Николаевна Хусанти юридици институчĕн Çĕнĕ Шупашкарти филиалĕнче преподавательте ĕçлет.

Çемье архивĕнче Николай Петровича тăрăшуллă ĕçшĕн панă Хисеп хучĕсемпе пĕрле çерем çĕтнĕ çĕрте ĕçленĕшĕн панă медальсем те пур. Вĕсенчен те хаклăраххи вара – хăй вĕрентнĕ ачасем асра тытни, çумра çывăх çынсем пулни. Нумай çыннăн пурнăçĕнче ырă йĕр хăварнăран Клементьевсемпе Кузнецовсен хăйсен те пурнăçра ырри çеç пултăр. Инкек-синкек вĕсен çемйи тĕлĕнчен пăрăнса çӳретĕр. Кун пек тĕрĕсрех пулать: мĕншĕн тесен çынсене ырă çын пулма пулăшнинчен, çынсен пурнăçне вилĕмрен çăлнинчен ырă ĕç пур-ши? Çынна ырă туни ырăпах таврăнтăрччĕ вĕсем патне те. Ссылка та, вăрçă та таптаймарĕ вĕсен телейне. Нимĕнле усал шухăшлă çын та ан тăтăрччĕ çав телей çулĕ урлă.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Кил тата хушма хуҫалăх



## Республика кунĕнчен – ҫĕкленӳллĕ кăмăлпа

Астаçă

Шетмĕпуç ял тăрăхне кĕрекен Мăн Турхан ялĕнче пурăнакан Н. Кудрявцева Республика кунне халалланă уявран ҫĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăнчĕ. Ăра вăл кунта Раççейăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килсе ҫитнĕ пултарулă ҫынсем умĕнче хăй ăсталăхне кăтартма пултарчĕ вĕт.

– Уява ҫапла майпа йĕркелени мана питĕ килĕшрĕ. Ҫакăнта тĕрлĕ наци халăхĕ пуханни, вĕсем куракана хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарни ҫав тери кăмăллă пулчĕ. Эпĕ хам чăваш наци тумĕпе, эрешĕпе кăсăклаланнă май тĕрлĕ регион ҫипуçне ытларах тинкертĕм, хамăрăннипе танлаштартăм. Ҫапах та атте-анне ҫӳренĕ тумтир ыттисенчен пахарах туйăнчĕ мана, – терĕ Нина Ивановна уяв хыççăнхи хавхаланулла кăмăлтуйăма пытармасăр.

Ăстаçă уява вăтăр ытла ĕç кăларнă. Чылайăшне сутнă, хăшне-пĕрне, уйрăмах хăйне сыхăххине, тăван яла илсе таврăннă. Республика кунне тĕрлĕ наци халăхĕн ал ĕç ăстисем, юрăкĕвĕ тусĕсем тата ыттисем хутшăннă. Уявра хăвăр пултарулăха кăтартма мĕн вăхăт хатĕрлентĕр-ха эсир тесе кăсăклантăм эпĕ.

– Ăна валли эпĕ ятарласа хатĕрленмен. Кăшт пушă вăхăт тупăнсанах ал ĕçĕ тытатăп, пĕр япала хыççăн теприне вĕçлетĕп. Ҫапла майпа ывăннине те, кăмăл пусăрăнчăкне те ирттеретĕп. Тĕрлĕ уяв-курав валли манăн вĕсем ялан ҫителĕклĕ, – терĕ вăл мана хăш-пĕр эрешпе паллаштарнă май.

Халĕ хушма хуҫалăхра тăрăшакан Нина Ивановна ĕмĕрех фермăри тата ытти йывăр ĕçпе пусăрăннă, ҫавна май куç ҫивĕчлĕхĕ те самай чакнă. Апла пулин те маттур хĕрарăм тăташах хăйне тĕрлĕ ĕçпе йăпатать, пурнăçра кичемминчен ытларах савăккине курма тăрăшать. Тивĕçлĕ канăва тухнăскер тĕрлĕ эреш ăсталанисĕр пуçне чечек лартса ӳстерет. Пусма ҫине тĕрлени е ешерекенни – йăлтах чун илемĕ валли. Нина апăпан Турă панă ăсталăхĕ пуррине пĕлтересçĕ ун пирки ял ҫыннисем. Ҫавăнпах та пулĕ ку тĕлĕшри вăрттăнлăха вĕренес текенсем те чылайăн.

Нина Ивановна Раççейри куç курманнисен районти обществăлла организацийĕн активлă членĕ пулнă май кунта йĕркеленĕ кирек епле ĕç-хĕле хутшăнма та вăхăт тупать. Районта кăна мар, республика шайĕнче те ав питĕ маттур вăл. Палăртма кăмăллă, ҫавăн пекех вăл чăваш наци радиовĕпе те тачă ҫыхăну тытать. Ăс-тăн ҫивĕчлĕхне тĕрĕслекен унти вăйăсенче ҫĕнтерсе концерт, спектакль курма кайма билетсене тата тĕрлĕ парнесене тивĕçнĕ. Тен хăшĕ-пĕри Нина Ивановна радиопа калаçнине те ас тăвать пулĕ. Ҫапларах маттур хĕрарăм вăл.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.



**Сăн ӳкерчĕкре: Нина Ивановна Республика кунне халалланă уява ҫакăн пек илемлĕ кĕпе-тумтир ăсталаса кайнă.**

## Ҫĕр улми тухăҫĕ мĕншĕн чакать?

Пахчара

Пахча ҫимĕç туса илесси ҫăмăл ĕç маррине чăваш хресченĕ никам каламасăрах пĕлет. Шел пулин те, тар тăкса ӳстернĕ тухăҫа тĕрлĕ чир-чĕр е хурт-кăпшанкă тапăнса шар кăтартма пултарать.

Сăмахран, пурте юратакан ҫĕр улми тухăҫне 10–50 процент таран чакаракан чирсен йышне 100 тĕрлĕ чир-чĕре тата хурт-кăпшанка кĕртнĕ. Чирсем сарăлса пынипех пулĕ юлашки ҫулсенче Раççейре тухăçлăх 20 ҫул каяллахи шайрах.

Пирĕн тăрăхра ҫĕр улмин ылтăн нематоди анлă сарăлнине ҫирĕплетеççĕ Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн специалисчĕсем. Пĕлтĕр кăна управленин октябрь уйăхĕн 10-мĕшĕнчи 161-мĕш хушăвĕпе килĕшӳллĕн Патăрьел, Вăрнар, Канаш, Комсомольски, Муркаш, Ҫĕмĕрле, Етĕрне, Елчĕк районĕсенчи 32 ялти 346 ҫĕр лаптăкĕ (101,13 гектар ҫинче) тĕлĕшпе карантин фитосанитари йĕркине ҫирĕплетнĕ. Пĕтĕмпе вара 293 ял ҫак муртан тăкак тӳснĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсен 1229,18 гектар ҫĕрĕ ҫинче те нематода алхаснă. Уйрăм ҫынсен 5670 лаптăкĕнче ку чир сарăлнă.

Чир ернĕ ҫĕр улми туни ҫинçе тата тĕмми пĕчĕк пулать. Хлороз аялти ҫулçисенчен пуçланать те ҫӳлелле хăпарать, ҫапла майĕпен пĕтĕм тĕм сиенленет. Ҫеçкисем те, чечекĕсем те шутлă кăна тухаççĕ, ҫĕр улми йышĕ палăрмаллах чакать. Кунашкаллисене йăран ҫинчен кăлармалла, кĕркунне ҫĕр улми кăларнă хыççăн ҫеçкине ҫунтармалла.

Пахчасем ҫума-ҫумăн пулни, вăхăтра кирлĕ мерăсем йышăнманни – мур алхаснин тĕп сăлтавĕ. Ытларах чухне нематода чирлĕ ҫĕр улми тымарĕнчен тата ҫимĕçĕнчен куçать. Анчах та, сăмахран, Елчĕк районĕнче чирлĕ сухан-порей, томат, кишĕр, сахăр кăшманĕ нематодăна вăй илтернĕ тĕслĕх те пулнă. Кунсăр пуçне ял хуçалăх техники, пушмак тата кĕреçе-кĕрепле ҫумне ҫыпçăннă тăпраран та сарăлать. Ҫĕр улмие пĕр вырăнтах кашни ҫул лартни те нематодăшăн лайăх.

Ҫавăнпа та кăҫалхи вырăна тепĕр 4–5 ҫултан тин таврăнмалла. Патшалăх инспекторĕ Наталья Круглова каланă тăрăх ку ҫимĕçе томат ӳстернĕ вырăна лартмалла мар, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр чирпе – фитофторозпа сиенленеççĕ.

Ҫĕр улмие унччен пăрçа йышши культурăсем, кукуруза ӳснĕ лаптăка лартма тăрăшмалла.

«Иккĕмĕш ҫăкăр» туса илнĕ вырăна вара люпин акса хăварсан аван, пăрçа йышши культурăсем те чирпе кĕрешме пулăшаççĕ, ытти мера пирки те манмалла мар.

Вăрлăх валли чире чăтăмлă сортсене суйламалла, 60–80 кунта пулса ҫитекенни пулсан тата лайăх. Атăл-Вятка регионĕнче «Жуковский ранний», «Пригожий-2», «Алмаз», «Фреско», «Сантэ», «Никита», «Рождественский», «Пушкинец» тата «Шурминский», «Акцент», «Аспия», «Гранат», «Заворовский», «Миракел» сортсене лартма сĕнеççĕ. Вăрлăха чирленине тĕрĕслесе тăракан ятарлă предприятисенче туянмалла.

Специалистсем ҫакнашакал меслет те сĕнеççĕ. Пахчана 4 пая пайламалла. Пĕр пайĕ ҫĕр улми валли пултăр, иккĕмĕшĕ – купăста, хăяр, кабачок, патиссон, кавăн валли; виççĕмĕшĕ – томат, сухан, ыхра, пăрçа, пăрçа йышши культура валли; тăваттăмĕшĕ – кишĕр, хĕрлĕ кăшман, ҫарăк валли. Тепĕр ҫул пĕрремĕш лаптăкра ӳстернĕ ҫимĕçсене иккĕмĕшĕ ҫине куçармалла, иккĕмĕшĕнчен – виççĕмĕшне тата ытти те.

Чир ертесрен ҫĕр улмие лартма тĕплĕн хатĕрленни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Упраннă чухне япăхрахсисенчен, ҫĕрме тытăннисенчен хăтăлмалла. Куçĕсене татса тăмалла, вăрлăха хӳтĕлемелли ятарлă хатĕрсемпе усă курни те пăсмĕ.

Чире яракан организмсенчен тислĕк йышши органика им-ҫамĕ хывни те аван. Витĕмлĕ минерал имҫамĕ шутне йывăç кĕлне (е улăм) кĕртмелле. Вăл тăпра йӳçеклĕхне чакарать тата ҫĕр улмин тутă пахалăхне лайăхлатать.

Ҫавăн пекех ҫĕр улми йăранĕсене ҫуркунне хыр тата чăрăш хуппине вĕтетсе сапмалла. Кашни ĕç хыççăн та хатĕрсене тата пушмака тасатма ан манăр.

